С(Чув)
А94

23873-чув.

АЛЕКСЕЙ АФАНАСЬЕВ

# КӲТЛАН

ЮМАХ





К С(Чув)
А94

Алексей АФАНАСЬЕВ

# КУТЛАН

(ЮМАХ)



ЧӐВАШ КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1981

84.3ЧУВ
А94

ПРОВЕРЕНО
2002

23 873-ЧУВ

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

Для младшего школьного возраста

Алексей Андрианович Афанасьев

ВУТЛАН

Сказка

На чувашском языке

ИБ 891

Редактор А. Я. Еруspecies
Художник Е. Е. Михайлова
Художественный редактор А. А. Афиногенов
Технический редактор А. Ф. Никитина
Корректор Р. И. Крысина

Сдано в набор 3.09.80. Подписано к печати 5.01.81. Формат 70×90/16. Бумага типографская № 3. Гарнитура литературная. Печать высокая. Физ. печ. л. 1,0. Усл. печ. л. 1,17. Учетно-изд. л. 1,62. Тираж 10000 экз. Заказ 4720. Изд. № 94. Цена 10 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР
по делам издательств, полиграфии и книжной торговли.
Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

А $\frac{0762-014}{М136(03)-81}$ 94—81

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1981 ҫ.



Эй, юмахăм-урхамахăм,
Çаклансассăн çилхӳнтен,
Эс мана ăçта пăрахăн,
Илсе кайăн хăш тĕлтен?..

Утмăл çухрăм улăх урлă,
Вăтăр çухрăм вăрманпа!
Вичкĕн çил юрлатăр юрă
Вĕçнĕ чух эпир санпа.

Пĕр яла пырса кĕретпĕр.
Пурăнать унта Вутлан.
Авалтан—аван пĕлетпĕр—
Вутлансем сахал пулман.

Çын телейĕ ятĕнче-им—
Хуть Иван пул, хуть Вутлан—
Ăшăтса ĕç курăк чейĕ,
Çук лашу—танкка çуран!

Килĕ-çурчĕ хăлтăр-халтăр,
Тайăлнă пĕр еннелле.
Кăмака çинчен анмасăр
Ăшăнса ларах хĕлле.

Çуркунне çитсен, пăртакçă
Чун кĕрет çак кил-çурта.
Мункунра çутса лартаççĕ
Çын пекех пĕрер çурта...

Чан сасси янрать пĕр хушă —
Чăнкăл-чăнкăл, чăнкăл-тан!
Çăпаталăх пур-ха пушăт,
Пур-ха шĕшлĕ, пăшатан...

Мучипе пурнаççĕ иккĕш
Сивĕре те ăшăра...
Пуррине пайлаççĕ тикĕс,
Пулманнийĕ—юмахра!

Мучăш ватă, шур сухаллă,
Астумасть: хăй миçере?..
Аллă çул-и е çĕр аллă—
Вилесех пулать пĕрре...

Виличчен парас ăс-хакăл
Ырă чунлă Вутлана.
Ытларах та çамрăк-ха вăл,
Йывăр питĕ самана.

— Йывăра çĕнес тесессĕн,
Çăмăл чышкă кирлĕ мар.
Тимĕр чышкăллă пул эсĕ,
Çап та сирпĕт вут-кăвар!

Ултава çĕнмешкĕн кирлĕ
Çивĕч ăс та вут чĕлхе.
Тилĕпе пул эс ху тилĕ,
Тус суйла ĕмĕрлĕхе,—

Пĕчĕкрен вĕрентрĕ мучăш
Вутлана телей тупма.
Мăянпаччĕ çăкăр хутăш,
Кĕл çинче пиçет улма...

Ӳсетех кунçул çуначĕ!
Ак Вутлан вунçиччĕре!
Вăрманта çӳрет сунарçă,
Сакăр сăнă йĕнĕре.

Кунĕпех Вутлан сулланчĕ,
Курăнмарĕ пĕр куян.
Яланах çул ăнаканччĕ,
Килĕшмерĕ тем паян...

Курăнмасть вăрманăн вĕçĕ,
Курăнмасть кăвак тӳпе.
Пĕр тĕле хĕвелĕн хĕçĕ
Тăраннă çут вĕçĕпе.

Вăрмана янратрĕ сасă—
Вăкăр мĕкĕрчĕ пулас.
Ун патне часрах васкас-и
Е хăрушлăхран тарас?..

Куç умне тухать уçланкă.
Пур енче тусать тусан.
Çапăçу кунта пуçланнă—
Янраса тăрать вăрман.

Майракаллă пăхаттир пек
Сулланса килет пăши,
Çуркаланнă юнлă тирĕ—
Уксахлать вăрман патши.

Мĕкĕрет—сасси хăрушă,
Куçĕсем çунаç вутла.
Сывлăш çавăрать пĕр хушă
Талпăнасшăн малалла.

Хăтăлса пулмарĕ, ахăр,—
Вăл пĕччеңçĕ ункăра:
Чĕрĕ юншăн сакăр кашкăр
Шăл шаккаççĕ ун тавра.

Мĕн тăвас?..
Аманнă паттăр,
Кам сана çăлса хăвартăр?..
— Хӳтĕле-ха, сĕм вăрман!
Хăтарсам мана, Вутлан!..

Тăшманпа кĕрешнĕ чух
Шутламашкăн вăхăт çук.
Уххипе тĕллет Вутлан:
— Пĕттĕр кашкăр-кашаман!..

Çĕрлехи çут çиçĕм евĕр
Вĕçрĕ сăнă шăхăрса.
Нимĕн тавçăрса илмесĕр
Ӳкрĕ кашкăр çаврăнса.

Сакăр сăнă—сакăр вилĕм,
Сакăр çурăлнă чĕре.
Юн ĕçсе ан астăр ӳлĕм
Вăрманта тукмак хӳре!

Сирĕлчĕ тусан. Шăпланчĕ
Çапăçу уçланкăра.
Куçĕсем пăшин шывланчĕç
Çак телейлĕ самантра.

Суранне-мĕнне пăхмасăр
Пычĕ вăл Вутлан патне.
Ун умне пăрахрĕ халсăр
Хуçăлнă майракине.

Майраки вĕçне хĕретнĕ
Чĕрĕ юн, кам юнĕ-ши?
Хыттăн-хыттăн мĕкĕрет те
Калаçать вăрман патши:

— Тав туса, манма пултармăп
Ĕмĕрех, этем, сана!
Парнене парса хăварăп
Хуçăлнă майракана.
Вăрмана пĕрре, çу кунĕ,
Ил ăна хăвпа пĕрле.
Ялкăшса çиçсе вăл çунĕ,
Эс çитсессĕн пĕр тĕле.
Çав тĕлте çĕре эс чавăн—
Чăн парнеçĕм çавăнта...
Сыв пулах! Халь ĕнтĕ таврăн,
Ĕмĕр пурăн савăнса!..

Вăрманта пăши çухалчĕ,
Таврăнчĕ килне Вутлан.
Мучăшĕ ăна курманччĕ
Пушă кутамккапалан:

Ак тата. Мĕн хăямачĕ?..
Кайăк çук-им вăрманта?..
Çывăрма ача йăванчĕ,
Вăранмарĕ çĕр хута.

Пит сахал-и, самаях-и
Иртрĕ вăхăт шăвăнса,—
Вăрманти пăши сăмахĕ
Кунсерен килет аса.

Уххине каллех майларĕ
Сунара кайма Вутлан.

Савăнтарчĕ кун уярĕ,
Çумăр чарăнчĕ каçран.

Сар хĕвел кулать йăвашшăн,
Çил ачи чупать мăран.
Этемрен тем пытарасшăн
Пăшăлтатрĕ сĕм вăрман.

Қаçченех çӳрерĕ каччă,
Тĕл пулмарĕ кайăка.
Уçланка тухсан,
вутланчĕ
Тĕлĕнтермĕш мăйрака!

Тĕлĕнчĕ Вутлан, хăрарĕ:
— Вут тивмен-ши сăхмана?..
Ват юман çинче сăнарĕ
Кушак пуçлă тăмана.

Мăйрака çунать çурта пек,
Çутатать тункатана.
Ак, Вутлан пĕр-иккĕ тапĕ,
Сирпĕтĕ тапса ăна!

Çук, пулмарĕ! Қăкламашкăн
Қирлĕ пулчĕ кĕреçе.
Аякра уларĕ кашкăр,
Тытăнчĕ Вутлан ĕçе.

Пĕр самант канса тăмарĕ,
Чаврĕ, чаврĕ пур вăйран.
Акă, тунката тымарĕ
Татăлчĕ аран-аран.

Пĕр тухман тара кăларчĕ
Пĕлевленнĕ тунката.
Пăхрĕ пĕшкĕнсе сунарçă:
Мĕн пытарнă-ха унта?..

Сӳнчĕ мăйрака сасартăк.
Таврари вăрман хура.
Мĕн-ха ку, çунса кăварлăн
Курăнчĕ çав шăтăкра?

Ылтăн кăшăллă арча-мĕн
Йăлтăрать çĕр айĕнче.
Шиклĕ тĕттĕм çĕр чаршавĕ
Сирĕлет ун çуттинче.

Йывăр арчине йăтмашкăн
Вутланра пурах вăй-хал:
— Çакăнта çĕклентĕр маншăн
Ĕмĕтленнĕ ăрăскал!

Шăтăр-шатăр! турĕ темĕн,
Тем çӳрерĕ ахăрса...
Шăтăкран кăларнăçемĕн
Çуттăнрах çунать арча!

Çĕр çине лартсан тин сӳнчĕ
Вут çути чĕтре-чĕтре.
Алтăр çăлтăрĕ те тӳнчĕ
Тĕлĕнтермĕш тӳпере.

Çакăн чул ăçтан вăй пулчĕ?
Қам вăй пачĕ Вутлана?
Çурăмĕ хыçне вăл хучĕ
Қăшăллана арчана.

Юрлакан çынна çул çăмăл,
Çавăнпа юрлать Вутлан.
Çĕкленет хаваслă кăмăл,
Итлесе юлать вăрман.

* * *

Савăнчĕ пулин те мучăш,
Ăшĕ унăн лăпкă мар:
— Ырлăх усалпа вăл хутăш.
Арчапа халь мĕн тăвар?..
Пуп таврашĕ, ял куштанĕ
Арчуна курас пулсан,
Енчĕкӳ халех пушанĕ,
Ним те юлмĕ сан, Вутлан.
Çĕнĕ çурт лартасчĕ хăвăрт,
Туянас лаша, ĕне.
Туй ирттерĕпĕр, тен, шăпăрт,
Қĕрĕпĕр этем шутне...

Тăрăшсан, пулать вăл пурте.
Çук хисепĕ кахала.
Аллуна тытсам та пуртă,
Қаскала та каскала!

Улт кĕтеслĕ лартрĕç çурт,
Çурчĕ пулчĕ йывăçран.
Пурăнмасть кунта улпут,
Пурăнмасть çĕрме пуян.

Маччаран шыв каймасан,
Алăкран çил вĕрмесен,
Мучăшпе кунта Вутлан
Ырă курĕç виличчен.

Çурт тавра—карта-хура,
Пусă чаврĕç пахчара.
Йăпанма килте пăртак
Кирлĕ йытăпа кушак.

— Çапăнма çăтти-çатти
Мунча кирлĕ,— тет ватти.
Лартрĕç пĕчĕкçĕ мунча.
Пулăшрĕ, эппин, арча!

* * *

Шутламан-туман çĕртен
Чухăн пуйнине пĕлсен,
Тĕлĕнчĕ пуп Çинахвун.
Қанăçĕ çухалчĕ ун!

Çиейми пулать хайхи,
Сирĕлет каçран ыйхи.
Мĕн тăвас-ха пуп аттен?..
Акă, тепĕр эрнерен
Чалкăшса çитет ял пупĕ
Мучипе Вутлан патне.
Ухтарса таçтан тем тупĕ—
Вĕчĕхсе хĕсет кусне.
Урайне тивет йĕленĕ
(Риза теççĕ çав тума)—
Тĕрлесе такам çĕленĕ
Пупсене тумлантарма.

Пысăк хырăм—такана
Алăкран кĕрет аран.
Мĕкĕрсессĕн, упана
Вăл вăратĕ ыйхăран:

— Эс ытла пуйма пуçларăн,
Çурт та лартрăн, пур лашу...
Çылăхлă чунна, мăнтарăн,
Явăçман-ши вăрлашу?..
Арчуна уçса пăхасчĕ—
Пур, тет, санăн çут арча!
Пĕлĕшсем пĕлсе калаççĕ —
Çарататăн эс, ача!..

Хĕрелмест Вутлан ним чухлĕ.
Çук сăлтавĕ хăрама:
— Маншăн ан тăкăр куççулĕ!
Ан çыхланăр ман çумма!

Куршанак пекех çыхланчĕ
Çăтă куçлă пуп атте:
— Эсĕ халиччен пуйманччĕ,
Нимĕн çукчĕ сан килте...
Турă умĕнче çĕр çылăх
Эс илетĕн ху çине.
Картара усратăн выльăх—
Қам-ха пачĕ укçине?..
Ылтăну сан пур—пĕлетĕп.
Çуррине парсам мана!
Çылăхран эп хўтĕлетĕп
Чиркĕве савакана...

— Қаçарах пире, аттемĕр,
Пирĕн ытлашши мĕн пур?..
Пурăнтăмăр пĕр хисепсĕр,
Ĕлĕкрех пĕтерчĕ мур...
Вăй илсе, аран-аран
Пурăнмашкăн пуçласан,
Вăрăпа тытмасăрах
Айăпласшăн кăлăхах...

Вутлана хăратнипе
Савăнма пуçларĕ леш:
— Эсĕ турă çыннипе
Кĕскенрех, Вутлан, пуплеш.
Арчуна уçса кăтарт —
Сан мĕн чухлĕ пур нухрат?

— Ах, пулинччĕ манăн ылтăн—
Сырмăттăмччĕ çăпата!—
Таврăнчĕ Вутланĕ хыттăн,—
Тухăттăмччĕ улпута!
Санпала эп, пуп аттеçĕм,
Лармăттăм, тен, юнашар.
«Қам пуян?»—тесен: «Пуп!»—
теççĕ —
Ху мана кăшт кĕмĕл пар!

Тиврĕ пуп чунне вут-çулăм,
Пуçĕ лекрĕ маччана.
Мĕкĕрен сасси ун хулăн,
Чĕтретет кăмакана:

— Чу! Усал сана çакланнă,
Эс турра мана пуçланă.
Тĕленет санран пур ял,
Пăсăлтăн йăлтах кăçал!

Кăшкăрашнипе пулмарĕ
Вутлана çавăрасси.
Пуп ĕнтĕ юрла пуçларĕ,
Пит çемçен тухать сасси:

— Вăрламан-и, тен, вăрланă —
Çын ăна курман, Вутланăм.
Тĕрĕслес шутпа малтан
Ĕç хушам сана, Вутлан.
Вут çĕлен пек ăйăра
Эп усратăп картара.
Эс, çавна вăрлаймасан,
Виççĕр сум мана паран!
Вăрлайсассăн—паттăр эс!—
Виççĕр сум хăвна тӳлетĕп!
Ак хĕвел, çветтуй хĕрес,
Турă умĕнче пуплетĕп.
Вăрлама килĕшмесен,
Хăтăлаймăн тĕрмерен.
Вата мучие хĕрхен,
Ан хăвар ăна пĕччен!—

Калаçса тăмарĕ урăх,
Тухрĕ кайрĕ пуп атте.
Те телей кĕтет, те хурлăх
Вутлана тăван килте?..

* * *

Шухăша каять Вутлан.
Халиччен вăл вăрлашман.
Хапсăнман вăл çыннăнне,
Хĕрхенмен хăй тупнине...

Çывăрма каçран выртсан,
Çаврăнать енчен енне:
Еплерех-ха картаран
Кăларас пуп лашине?..

Пупĕ те ухмах çын мар,
Тарçисем те çиччĕн тан.
Вăрлама пырсан, чукмар
Сикĕ тухĕ картаран.

Мучăшĕ калать çапла:
— Мĕншĕн ӳкрĕн-ха хуйха?
Тĕттĕм чух çывăрмалла,
Ирхине куç курĕ-ха...
Çута хĕвелпе пĕрле
Шухăшлăпăр ирпеле.
Шур сухалăм, кам пĕлет,
Çитмĕлтен те, тен, иртет...
Шаклаланнă пуçăм пур,
Шухăшпа çаралнăскер.
Халиччен пулманччĕ хур,
Пурăнасчĕ-ха чипер!

* * *

Каç пулсассăн, ăйăра
Картаран кăларчĕ те
Çичĕ тарçă ун тавра
Хăй тăратрĕ пуп атте.

Чĕлпĕре тытать пĕри,
Утланса ларать тепри,
Виççĕмĕшĕ хӳререн
Тытнă вăрă тивесрен.

Выртрĕç ыттисем çĕре,
Кашнине — пĕрер ура.
Пĕр хурах та тĕнчере
Ан вăрлайтăр ăйăра!

* * *

Мучăшĕ ирпе ирех
Вăратать те мăнукне
Пысăк кăкшăмпа эрех
Кăларса лартать умне.

Ятлаçса илет Вутлан:
— Ĕçес çук эп нихăçан!
Ĕмĕтпе ĕç тăвакан
Эрехпе вараланман!

Лĕхлетсе кулать мучи:
— Эреххи вăл саншăн мар...
Пур вĕт пупăн çич тарçи,
Çавсене хăна тăвар...

Канăçсăр кун час иртет,
Хĕвелпе пĕрле сӳнет.

Çĕрлехи пăч-тĕттĕмре
Ыйхă тутлă тĕнчере.

Ватă çын вĕрентнине
Кĕçĕннин итлемеллех:
Хай Вутлан хул хушшине
Хĕстерсе тытать эрех.

Пуп пусми айне шала
Пытанать çын куриччен.
Пуп атте кăмканпала,
Куркапа тухать пӳртрен.

Çичĕ тарçă-тĕрçине
Чей ĕçтерчĕ черетпе:
— Тӳсĕр,—терĕ вĕсене,—
Куç хупмасăр çĕрĕпе!

— Пуп аттешĕн тăрăшни
Сăваппа вăл пĕр танах!—
Сăхсăхса илет кашни.—
Эс, аттемĕр, çывăрах!..

Тĕм-хура йăлт таврара.
Хамлатаççĕ йытăсем.
Сыхласа усал вăрра,
Шăп тăма пушшех кичем.

Лайăхрах итлет Вутлан:
Мăшлатать пуп чăланта.
Вăранмасть пĕр çывăрсан
Вăл, аçа çапсассăн та!

Акă çур çĕр çитеспе
Çутă кĕмĕл хĕреспе
Карлăклă пĕр алăкран,
Пуп пулса, тухать Вутлан.

Хулăн сасă—пуп сасси,
Йывăр-и-мĕн палласси?
— Курăнмасть-и-ха Вутлан?—
Ыйтрĕ ватă тарçăран.

Ыйхă витĕр леш калать:
— Вăрă çын пиртен хăрать...
Эпĕр çиччĕн, вăл—пĕччен,
Тухас çук вăл килĕнчен...

— Тĕрĕсне калатăн эс.
Ылтăн сăмахху. Мерттес!
Ир енне кăшт сивĕрех.
Сыпăр-ха, пăртак эрех,—

Кашнине тулли стакан
Тав туса парать Вутлан:
— Ĕçĕр! Маншăн чи ырри —
Тĕнчере эсир пурри!—

Кăшт тăрсан, Вутлан тата
Тултарса парать эрех.
Хуçана мухта-мухта
Тарçăсем ĕçеç тĕппех.

Çур çĕр çитрĕ пулмалла,
Шăплăх пусрĕ пур яла.
Çывăрнă çĕрте автан
Авăтса илет аран.

Усăк пуçлă тарçăсем
Тайăлаççĕ ларнăçем.
Пулнă-ши-ха халиччен
Эрехе çĕнтерекен?..

* * *

Чăлантан ирпе ирех
Тухрĕ акă пуп атте.
Тӳннĕ тарçăсем çĕре,
Калăн, салтăннă кĕлте...
Пупăн çӳçĕ вирелле
Йăшăл! тăчĕ самантра.
Çичĕ тарçă—çич виле
Вăрлаттарнă ăйăра!

Пĕрене çинче пĕри
Тĕлĕкре курать вăрра.
Тĕлĕрсе тăрать тепри—
Аллинче ун сӳс кантра.

Ăйăрăн хӳри тесе,
Ланчашка сӳс тытнă та,
Пуринчен те хыçалта,
Ав, тăрать тепри сĕнксе.

Ыттисем пĕр юпана
Ыталанă пур енчен...

Курчĕ пупĕ Вутлана—
Айăрпа килет лерен:

— Пуп аттеçĕм, айăру
Вут пекех иккен хĕрӳ!
Виççĕр тенкĕ памасан,
Кĕмĕл—санăн, айăр—ман!

Пĕр хĕрелчĕ пуп атте,
Пĕр шуралчĕ, самăрскер:
— Юрĕ-çке,—тет,—кĕр пӳрте.
Аш çунать ман. Чей ĕçер...

Ĕçрĕç чей пĕрер курка.
Пупĕ пачĕ укçине.
Енчĕк пушшине курса,
Чăмăртарĕ чышкине:

— Ан васка-ха, чим-ха, чим,
Енчĕкĕм пушанчĕ-им?
Кĕмĕлĕм, тавах турра,
Пур-ха манăн арчара.
Эс пĕлен ман майрана,
Вăрлама пултар çавна!
Шăп тăватçĕр тенкĕме
Шеллеместĕп тӳлеме.
Эсĕ ху, вăрлаймасан,
Пинĕпех мана паран!

Çамрăк çын ӳкет хуйха:
— Кам вăрлайтăр уйăха?..
Кам вăрлайтăр хĕвеле?..
Пуп аттем, мана шелле!..
Турă çырнă арăмна
Çумăнтан епле çăлас? .

Пачăшкă кулать кăна—
Вутлана тытрех пулас!

* * *

Таврăнчĕ килне хусах.
Мучăшĕ кĕтет килте.
Куçĕнчен пĕрре пăхсах
Анланать вăл йĕкĕте:

— Мĕншĕн-ха пуçна эс усрăн?
Пурнăçу-и сан начар?
Ан кулян-ха. Пуршăн-çукшăн
Чĕрӳне ан йăшкаттар.
Апатлан та—вырт та çывăр.
Ыйхă—чи паха имçам.
Ват пуçа пулсан та йывăр,
Саншăн шухăшлăп, ачам.

* * *

Кӳлчĕ айăрне ирех,
Лартрĕ майрине çумма:
— Шыраса çӳретĕрех
Вăрă манăн арăма!..—
Савăнса кулса кăна
Пуп яр усрĕ хапхана.

Витĕр куçлăскер, Вутлан
Ирхине, тул çутăлсан,
Курчĕ пупăн лашине,
Пупĕпе ун майрине...

Урхамах утланчĕ те
Пĕр вĕçтерчĕ тӳр çулпа.
Вăрманта-и е хирте
Улталас пулать пупа!

Çитрĕ тĕттĕм вăрмана,
Ирĕк ячĕ лашана.
Çул хĕрне тухсан, Вутлан
Çакăнчĕ ват хурăнтан!

Сулланать Вутлан «вилли»,
Усăннă ĕçчен алли,
Çăпати лекмест çĕре—
Чарăннă тапма чĕре.

Кăлтăр-кăлтăр çулпала
Тăрантас килет кусса.
Пупĕ ларнă хыçала,
Арăмне ыталаса.

Чарăнчĕ, ак, пуп лаши,
Пуп атте хĕрес хывать:
— Пĕтрĕ-мĕн Вутлан нуши.
Вилнĕ. Çакăнса тăрать!
Чăтайман. Хăранипе
Çакăннă шуйттан чури.
Пĕр усал чун пĕтнипе
Йывăр шухăш пĕттĕр-и!

Тупрĕ йытă вилĕмне,
Çавă кирлĕ кахала.
Хăй вăрланă ылтăнне
Пайламарĕ манпала!..
Арăм, халĕ ан хăра,
Мулĕ юлчĕ хамăра!—

Тăрантас çинчен анать
Пуп атте кула-кула.
Урхамахĕ—çилçунат
Чĕрнипе чавать çула.

Шутламан-туман çĕртен
Çакăнна çын чĕрĕлет!
Тăрантас çине çӳлтен
Салтăнать те ялт! сикет!

Тытрĕ вăл пуп майрине,
Туртрĕ кăрт! тилхепине.
Вирхĕнчĕ лаша çулпа,
Тусанпа витсе пупа.

Ним тума пĕлмен енне
Пуп çăлма пăхать çӳçне.
Аркуна çĕкле те, пуп,
Арăм хыççăн чуп та чуп!..

Курăр пирĕн Вутлана:
Хапхине ярт! уçрĕ те
Хăй вăрланă майрана
Хупрĕ тĕттĕм кĕлете.

Пĕççине çапа-çапа
Кӳршĕ-аршă тĕлĕнет:
— Улталанă ват пупа!
Майрине вăрланă, тет...

Савăнать ял-йыш, кулать,
Пухăнать Вутлан тавра.
Килĕнче пуп макăрать.
Кĕлетре ларать майра.

* * *

Сĕр-сĕрлет хула пасарĕ,
Чан çапать чиркӳ тăн-тан!
Çисĕм евĕр, пуп хыпарĕ
Хулана çитет ялтан.

— Пупăн арăмне вăрланă!..—
Кĕрлесе шавлать пасар.
— Кам вăрланă, тет?
— Вутлан-и?..
— Çавă-çке, никам та мар!..

Хыпара илтсессĕн, урчĕ
Аслă пупĕ—эрхерей:
— Ик хутчен пупран вăл кулчĕ!..
Тек кулаймĕ шĕвĕрккей!..—

Лашине кӳлсе вĕçтерчĕ
Пуп патне вăл тӳп-тӳрех.
Пупĕ, тарăхса, ĕçтерчĕ
Аслине хаяр эрех:

— Патшана систер, аттемĕр,
Пĕтерет Вутлан пире.
Усала часрах çĕртсемĕр,
Тĕп тусамăр тĕрмере.

Хаярланчĕ леш, шăртланчĕ,
Ял пупне ятла-ятла:
— Санăн ма çыхланмаллаччĕ
Ун çумне куршанакла?!.
Пĕр санран кăна кулмаççĕ,
Ял кулать халь чиркӳрен!
Кĕлете хăвна хупасчĕ—
Пĕлĕттĕнччĕ ӳлĕмрен!—

Кантăка пуп уçрĕ, акă:
Тем кĕрлет, те аслати...
Пухăнна пĕве сарлакăш
Урама ватти-вĕтти...

Пир каски çинче Вутлан-мĕн.
Хыпарлать ял халăхне:
— Пуп сире пĕр ним тăваймĕ!
Йышăнăр манран парне:
Парăп кашнине лашалăх,
Çурт лартмалăх укçама!—
Кĕрлеме пуçларĕ халăх,
Чĕркуçленчĕ пуç тайма.
Пуç тайма Вутлан хушмарĕ:
— Валеçместĕп хам мула.
Çак пуянлăх — халăх тарĕ,
Халăха вăл пулмалла!..
Пупшăн та парнеçĕм хатĕр—

Илтĕр хăйĕн майрине!
Ман пата халь пурте айтăр:
Хăйĕн пайĕ—кашнине!

Татăлнă пĕве пек шурĕ
Йышлă халăх аната.
Сăнĕсем пупсен шап-шурă,
Хытрĕç **тăнă вырăнта:**

— Чим... Аçтан ун чухлĕ мулĕ?!
Ылтăн пухнă вăл аçтан?!
Енчĕкĕ, чăнах та, хулăн —
Те çынах вăл, те шуйттан...

Шухăшларĕ аслă пупĕ,
Сухалне хыçа-хыçа:
Вутлана тытса вăл хупĕ,
Юлĕ ун валли укçа...

Хăй умне шур хут вăл хучĕ,
Тупрĕ шĕвĕр кăранташ.
(Хуранта пиçет хур пуçĕ,
Çатмара çунать чăш-паш!)

Пуппала çыраççĕ иккĕш,
Çар ыйтаççĕ патшаран.
Чиркĕве çаратнă имĕш
Вăрă пуçлăхĕ—Вутлан...

«Салтаксем кирлех тытмашкăн
Ирсĕр вăрă-хураха.
Çавăрса пĕтерчĕ каскăн
Хăй енне пур халăха...»

Тарçине хытарчĕ пупĕ:
—Çул çинче пулсам вăрт-варт!
Вăр-хурах сан хыççăн чупĕ—
Çырăва эс ан кăтарт!

Мĕн тăвас-ха чухăн тарçăн?
Чухăн сутмĕ чухăна.
Çыруне кайса тыттарчĕ
Çав кунах вăл Вутлана.

Çырури чиркӳ пичечĕ
Ячĕ тарăн шухăша:
Хуйхă-суйхă иртекенччĕ,
Хальхинче умра — патша!

Пит çӳлте патша йăви,
Чул тĕрме те пысăк çар!..
Чухăн сенĕкĕ, çави
Чул хӳмешĕн ним те мар...

Малтанах эрхерейрен
Пуçласа пăхатпăр, тен?..
Мĕнлерех-ха тавăрас?
Мучирен канаш ыйтас!

— Ан каппайтăр-ха чамасăр
Аслă пуп.
Кала, мучи,
Ун чапне пăхса тăмасăр
Тавăрма пултарăп-ши?

— Ирхине тăрсан калаçăн,
Вырт та çывăр,—тет мучи.—
Ир вăраннă кăвакарчăн
Тупнă, тет, тулă пĕрчи!

* * *

Пусрĕ шурă хур Вутлан,
Рак çаклатрĕ çырмаран,
Мучăшĕ вĕрентнипе
Илчĕ вăрăм шур кĕпе.

Хур çунаттине хуçса,
Кĕпепе, ракпа пĕрле
Чикрĕ те пир хутаçа,
Тухрĕ çул çине çĕрле.

Парăннă хула ыйха.
Çывăрать чиркӳ, тĕрме..
Йытăсем те уйăха
Чарăннă сиксе вĕрме.

Çăтмахри пек садĕнче
Çывăрать-мĕн эрхерей.
Умĕнчи сĕтел çинче
Сăмаварĕ, пылĕ, чей...

Васкамасăр тăхăнать
Каччă вăрăм кĕпине.
Ик енне ик шур çунат
Çирĕплетрĕ хул çумне.

Йăшăл-йăшăл раксене
Ячĕ вăл сĕтел çине.
Рак хаччи çинчи çурта
Çутатать умри сада.

Кĕлĕ юррине аван
Юрлама пĕлет Вутлан.
Аллинче ун çут хĕрес—
Пупăн ыйхине сирес!

Йăшăлтатрĕ эрхерей:
— Кам юрларĕ тĕлĕкре?..
Çуртасем те çап-çутах—
Ку çветтуй-ши е манах?..

Вутлана шап-шур тумпа
Паллаяс çук кăнтăрла.
Мĕкĕрнĕ пек сасăпа
Юрласа калать çапла:

— Туррăмăр хушнипелен
Антăм эп вĕçсе çӳлтен.
Васкаса тумланкала,
Пырăн эсĕ манпала.

— Мĕншĕн?—ыйтрĕ эрхерей.—
Эп кĕмен-çке çылăха?..
— Çылăх мар, чĕнет телей
Чи çӳлти патшалăха!
Ыр чураçăм, халлĕхе
Кĕрсе лар ак çак миххе.
Пĕлĕт витĕр хĕн иртме,
Ан шутла эс ӳсĕрме!

Пӳлĕх калани — саккун.
Çын иртеймĕ шăпаран.
Эсĕ, çылăхсăр ыр чун,
Çитĕн çăтмаха паян.—

Йатрĕ турă çыннине
Вăйлă вăкăр пек Вутлан:
— Тухрăм,—терĕ,—çул çине,
Кĕлĕ юррине ан ман.

Тарлă çурăм хыçĕнче
Кĕлтăвать хай эрхерей:
— Аслă турă садĕнче
Ĕмĕр курăп,—тет,—телей!

Ял урамĕ. Çил хапха.
Миххине хĕсет Вутлан:
— Пĕлĕтсем çăралчĕç-ха.
Тӳс пăртак. Ан тапкалан.

Кĕчĕç тĕттĕм картана,
Улăм сарнă кĕтесе.
— Çитрĕмĕр ак сулхăна.
Ларăпăр пăртак кĕтсе...

Килĕç тепĕр сехетрен
Çветтуйсем алтарь умне.
Чарăнмасăр эс унччен
Юрласа лар кĕллӳне.—

Шăппăн хупрĕ хапхине,
Чупрĕ килнелле Вутлан.
Пуп вăранчĕ ирхине,
Сасă илтрĕ картаран.

Тĕлĕнет пуп: кам ара?
Мĕн çухатнă ман патра?..

Эрхерей сас илтнипе
Михĕрен хăрать тухма.
Аялти кĕпе-йĕмпе
Намăс мар-и курăнма?!
Вăл хăйне айăпличчен
Вутлана ятлать малтан:

— Чыслă ятăм халиччен
Кĕлмĕç мăшкăлĕ пулман!
Пĕр никам та мар, Вутлан
Хăтлантарнă ку ĕçе!
Йĕксĕке тавармасан,
Пурăнмастăп çĕр çинче!

Çук, пĕлеймĕн ним теме!
Ку мĕскер?.. Мĕн япала?..
Сумлă, ятлă этеме
Мăшкăл тунă-çке çапла!

Тĕлĕнеççĕ аслинчен
Пуппала майри шалтах.
Хăнана çын куриччен
Пӳртелле кĕртес часрах!
— Вутланах çав, аçтаха
Пăтратать пур халăха.

Йыхăрса салтаксене,
Хуптарасчĕ тĕрмене!—
Теççĕ пупĕпе майра,
Тилĕ пек йăпăлтатса.—
Вăл вилсессĕн, хамăра
Ирĕк юлĕ, иçмасса!
Килтĕр çĕр салтак яла
Хĕçпеле, пăшалпала.
Пăнтăртаттăр параппан —
Пĕттĕр тĕрмере тăшман!

Эрхерей — хура сухал
Таврана пăхать кал-кал:
— Çаврăнкалăр-ха вăр-вар,
Лартăр сарă сăмавар!
Паянах çав Вутлана
Йыхăрасчĕ хăнана!
Пуç тавра пĕр шутличчен
Лекĕ пирĕн читлĕхе!..

Хĕпĕртет пуп чĕререн:
— Питĕ лайăх!.. Хе-хе-хе!..

Çухатмасăр вăхăта
Кăмака хутать майра.
Сурчăкне çăта-çăта
Чарăнать çын урамра—

Çу шăрши те пыл шăрши
Сарăлать таçтан-таçтан.
— Пуп килне кам килнĕ-ши?..
— Хăнана килет Вутлан...

* * *

Чухăн тарçă вăрттăн-шарттăн
Çитрĕ те пуп килĕнчен
Вутлана хуллен вăратнăн
Пăшăлтатрĕ хăлхинчен.

Пĕтĕмпех Вутлан ăнланчĕ,
Канашларĕ мучăшпе.
Хăнара тахçан пулманччĕ,
Вăрахран сыпман шŭрпе...

Ыр çынсем савса чĕнсессĕн,
Ан кĕттер чĕнекене.
Танлă вырăн — тур кĕтесĕ—
Хăнара чи аслине!

* * *

Кŭршĕлле Вутлансемпе
Тăлăх арăм пурăнать.
Çийĕнче те кив кĕпе,
Çурчĕ те аран ларать.

Тĕл пулман ĕмĕрĕнче
Ырă, çутă кун инке.
Пĕр хĕр ŭсрĕ килĕнче—
Вăл та пулчĕ чирлешке.

Вилнĕ чирлĕ хĕр ĕнер,
Сар чечек пек сарăскер.
Питĕ йывăр хуйхăпа
Татăлса йĕрет аппа:

— Асăнма тăрсан хĕре,
Çăнăх пĕтнĕ пŭлмере.
Масарне кам чавĕ-ха?
Кам-ха йăтĕ тупăка?
Пытарма тĕн йĕркипе
Хĕрĕмĕн çук çĕн кĕпе...

— Пурте пулĕ,—тет Вутлан.—
Эс, аппаçăм, ан кулян!
Пĕр сехетлĕхе кăна
Парса яр хĕре мана...

Тĕлĕнсе пăхать аппа,
Куççульне шăла-шăла:
— Эп йĕретĕп хуйхăпа,
Ма кулатăн эс капла?..
Сывă чух ыйтманнине
Ма ыйтатăн вилене?..

— Ах, аппаçăм, ан кŭрен.
Чăн калатăп, чĕререн,—
Калаçать çапла Вутлан,—
Ирĕк ыйтрăм эп пупран—
Каçармашкăн çылăхне
Илсе кайăп ун патне...

* * *

Хулари пек тумлантарчĕç
Хунă куçлă пикене,
Чĕрĕ евĕр тайăнтарчĕç
Сăрлă тăрантас çине.

Ун çумне Вутланĕ ларчĕ,
Калăн: сар хĕрпе каччи.
Ярăнса силленчĕ ларчăк—
Тытрĕ тилхепе мучи.

Тĕпĕртетрĕ тăрантасĕ,
Мăкăрлантарса çула.
Анаткасĕ, вăтакасĕ
Кантăкран пăхса юлать.

Пуп çуртне малтан пĕчченçĕ
Пуç тайса кĕрет Вутлан:
— Мĕн çиессĕ?..
Мĕн ĕçессĕ?..
Мĕн ĕçки вара паян?..

Эрхерей шала пытаннă.
Килĕнче пуппа майра.
— Сан ятран юри, Вутланăм,
Сĕрчĕ матăшкă сăра!
Кăлăхах санпа тавлашрăм.
Çитĕ. Ырrăн килĕшер.
Эс манран кулмашкăн чарăн,
Хам та йăнăшнă ĕнер...
Хăвăн та мулу юлман-тăр—
Халăха валеçрĕн эс...
Малашне те турă патăр,
Умăнта пулсан хĕрес...

Вăлтана лекместь Вутланĕ,
Хĕрелмест сăн-пит пачах.
Аслă кĕнеке вуланăн,
Пуçласа ярать сăмах:

— Пуп аттеçĕм, эпĕ хатĕр
Килĕшме яланлăха.
Укçана тытма пĕлмесĕр
Йăлт салатрăм халăха.
Хам валли ним хăвармарăм,
Чăн калатăп,—тет Вутлан.—
Ир вăрантăм, шухăшларăм:
Авланас килет чунтан!
Тур çырни ман, сар пикеçĕм,
Тăрантас çинче кĕтет.
Тăвăр халĕ, пуп аттеçĕм,
Турă умĕнче венчет!

Ват мучи кĕрсе тăрать те:
— Час пулать-и,—тет,—венчет?..
Чиркĕве пуп уçтарать-и
Е кунтах-и йĕркелет?..

Эрхерейĕ пăшăлтатрĕ:
— Венчетне кунтах тăвас...
Ман эмелĕм çывăрттарĕ—
Ыйхă черккине парас!..

— Ларăр!—терĕ кĕçĕн пупĕ.—
Пур эрехĕм, пур шерпет!—
Ун чĕлхи-çăварĕ çу пек,
Тилĕрен те ирттерет.—
Çĕн çынна чĕнсе кĕр, арăм!
Тараватлăхна кăтарт!
Пирĕн çурт — пĕлет пур ялăм!—
Ырă çыншăн пит юмарт.

Пуп майри курать: Вутланăн
Арăмĕ чечек кăна!
Савăнмашкăн турă панă
Чаплă мăшăр тăшмана!

Калаçасшăн мар вăл темшĕн—
Пысăк кăмăллă куран.
Пуп майри пÿрте кĕртесшĕн
Виççĕ чĕнчĕ алăкран.

Сар пике пуçне сĕлтмерĕ,
Хускалмарĕ вырăнтан.
Çамрăк каччă ĕненмерĕ,
Хирĕç тухрĕ вăрахран.

Савнă пикине пăртакçă
Ÿкĕтлесшĕнччĕ пулас—
Чăрăнса шак хытрĕ каччă,
Хускалмарĕ тăрантас...

Ним тума пĕлмерĕ каччă,
Чакрĕ кутăн: «Ах!» та «Эх!..»
Савнине йăтма хăтланчĕ—
Хускалмарĕ леш. Вилнех!

— Кам вĕлерчĕ?!—терĕ хыттăн
Хăй тавра пăхса Вутлан.—
Кирлĕччĕ сире сар ылтăн,
Хăтăласшăнччĕ манран...

Савнă арăма вĕлертĕр—
Пытараймăр турăран!
Халь мана тытмашкăн эсĕр
Çар ыйтатăр патшаран!..

Тарçисем çине пит сиввĕн
Пăхрĕ пупĕ чалăшса.
Шанчăклă тарçи-тĕрçи-мĕн
Янă хуçине сутса!

Тарçăсем енне хăюллăн
Кăшкăрчĕ Вутлан çапла:
— Пуп патне текех ан юлăр!
Утăр ирĕк çулпала!
Мĕн тăвать-ха аслă пупăр?
Ма кăлартăр картаран?..
Пирĕн халăх ĕмĕр суккăр
Пулас çук. Курать аван!
Кайрăмăр! Вĕсен апачĕ
Ларĕ пирĕн тип пыра.
Венчетре пулса курманччĕ,
Курасси—малта, умра!

Вутлансем тухса та кайрĕç,
Кайрĕç пупăн тарçисем...
Çилĕпе ним тăваймарĕç
Тарăхнă пуп таврашсем.

Сухалне çăлма пикенчĕ
Намăс курнă эрхерей:
— Ĕмĕрне çакна кĕтменччĕ,
Парăр,—тет,—эрехĕре!..

Шăннă пек, чĕтрет ял пупĕ,
Хытнă пек, ларать майри...

Вăйăран та вăкăр тухĕ
Тенине манать тепри...

* * *

Чухăнăн чĕри чул мар,
Хўхлесе инке йĕрет.
Тем чухлех Вутлан тавар
Алăкран йăтса кĕрет.

Тĕлĕнет шалтах инке:
Хĕрĕн тумĕ пурçăнран!
Сывă чух ăна пике
Алăпа тытса курман!..

Уринче мерчен пушмак,
Пуçĕнче шăрçа калпак.
Виличчен çак тумтире
Ма памарĕç-ши хĕре?..

Чĕрĕ чух чĕр чечекле
Тум парасчĕ тăлăха:
Йăмăхтарĕ хĕвеле,
Вăтантарĕ уйăха...

Ним тума пĕлмест аппа:
Макăрас е савăнас?
Хĕрĕ ун каçалапа
Йăшăлтатрĕ... пачĕ сас!

Пăшăлтатрĕ хĕр тути,
Йăлтăртатрĕ йĕкĕр куç...
Сăнĕ — те хĕвел çути,
Те хĕрелнĕ шурăмпуç...

Тĕлĕнеççĕ пўртрисем.
— Эп ăçта-ха,—тет,—аннем?
Хĕр вилмен иккен, сывах—
Çывăрнă çапла вăрах.

Чаплă тумтирне курсан,
Тăрса ларчĕ тупăкран.
Вăй салатрĕ ыйăха,
Чĕрĕ тарчĕ аякка!

Каччă курчĕ те хĕре—
Чăрăнчĕ тапма чĕре!
Мĕнле-ха вăл халиччен
Кўршĕри хĕре пĕлмен?..

Ун чечек сăнне курман,
Тĕлĕнмен сасне илтсе?..
—Ыранах, Вутлан, авлан!—
Терĕ мучăш, тимлесе.

* * *

— Ман арчаçăм ĕнтĕ пушă,—
Тет мăнукĕ мучăшне.—
Ним шеллемĕп эпĕ туйшăн,
Сутăп пушă арчине...

Арчине уҫса ҫеҫ ячӗ
Йывăр шухăшпа Вутлан—
Тӗксӗм пӳрчӗ ялт! ҫуталчӗ,
Ҫиҫӗм ҫиҫрӗ арчаран.

Мучăшпе пăхаҫҫӗ иккӗш
Пӗшкӗнсе арча ăшне:
Ҫак мула ăҫта-ши чикӗҫ?
Ылтăн тулнă арчине!

— Арчара пурах-тăр ăрăм,
Ахальтен тулман арча.
Ялйыша мӗн чул ыр турăм,
Кӗнӗ ҫавăн чул укҫа!

Шухăшларӗҫ тӗрлӗ майлă:
Мӗн тăвар ку укҫапа?..
Кирлӗ ик ҫынна нумай-и—
Пӗр лаша, пӗр урапа...

— Вырт та кан-ха,—
терӗ мучăш.—
Курăпăр-ха ир тăрсан.
Авланмашкăн тытрăн шухăш—
Сан туйна тăвас ыран!

* * *

Икӗ пупӗ хатӗрленчӗҫ,
Кӗтрӗҫ тӗттӗм пуласса.
Аслă ҫулпала вӗҫтерчӗҫ
Пар лаша кӳлсе тухса.

Патшана курса каласшăн:
Каҫăртать пуҫне чура!
Вутлана тытса хупасшăн
Туйӗ пынă вăхăтра...

* * *

Чарăнмасăр виҫӗ талăк
Туй туса кӗрлерӗ ял.
Вутлана пиллерӗ халăх
Сывлăх та телей, вăй-хал...

Сиккелерӗ, тӗпӗртетрӗ,
Авăнса, урай кашти.
Мăйăха сăра йӗпетрӗ,
Йăлăхтарчӗ пыл тути...

Виҫӗ кун иртсессӗн шавлăн,
Пухрӗ халăха Вутлан:
— Турăмăр туя мухтавлăн—
Пурăнар ҫапла ялан!

Пирӗн ырлăх та татулăх
Килӗшмест-мӗн патшана.
Куҫҫульпе асап та хурлăх
Янă пирӗн таврана.

Салтаксен пăшаллă ҫарӗ
Ҫывхарса килет яла.
Сӗм вăрман пире хӳтарӗ,
Вăрмана пытанмалла!

Ҫапăҫмашкăн вăй пухар-и!
Айтăр, кӳлӗр урапа!
Халăх туслăхӗ вăй парӗ
Кӗрешмешкӗн тăшманпа!..

Тӗпӗр-тӗпӗр куҫрӗ халăх.
Чунсăр юлчӗ ватă ял.
Ҫут телейшӗн ҫапăҫмалăх
Халăхра пурах вăй-хал.

Пӗтӗм ял хăпса васкарӗ
Ҫын пулман сӗм вăрмана.
Кивӗ ял ҫунса палкарӗ,
Кӗл ҫеҫ юлчӗ патшана!





23873-чув
Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО



ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока



10 пус.



ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ